27-50/2

Раҫҫей Фетератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респуплĕкĕ

Тимухха Хĕветĕрĕ
Ф. Т. Тимофеев.

# Чăваш Чĕлхийĕн
# КРАММАТТИКĔ

## Ҫинтăкҫис тĕпĕсем

Чăваш Оплăҫĕнчи Кĕнеке Кăларакан Уйрăм
ШУПАШКАР ◘ 1924

Раҫҫей Фетератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респуплӗкӗ

Тимухха Хӗветӗрӗ

Ф. Т. Тимофеев.

# Ђӑваш Ђӗлхийӗн
# КРАММАТТИКӖ

## ҪИНТӐКҪИС ТӖПӖҪЕМ

Ђӑваш Оплӑҫӗнђи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑм

ШУПАШКАР ◘ 1924

Ҫакӑ ҫӑвашла ҫырнӑ ҫинтаксис—ҫӗнӗ йапала.

Пур вулакансене, пуринҫен ытла уҫҫитлӗсене, мӗн май килменнисем ҫинҫен пӗр иккӗленмесӗр пӗлтерме ыйтатпӑр. Ку пит пысӑк ӗҫ, ӑна вӑрӑммӑн ҫӳтсе йавса, ҫӑваш ҫӗлхине пӗлесшӗн тӑрӑшакансен пӗрлешсе тумалла.

Ӑна тунӑ ҫух Н. И. Ашмарин кӗнекисене алӑран пӑрахмалла мар, мӗншӗн тесен, пирӗн ҫӑваш ҫӗлхи йӗркин, унӑн йӑлисене ун пек тӗплӗ пӗлекен ку таранҫҫен никам та пулман.

**Ҫӑваш Кӗнеки Уйрӑмӗ.**

*25/XI—24 ҫ.*

Чув. Областлит № 460. Печ. 3.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

# Умӗн калани.

Вырӑс вӗренӳҫӗсем: Поттепңа, Поршеҫински, Будде, Похоротитски, Форттунаттӑв, Овҫаникко-Куликковски, Пешковски, Петтерссон, тата ыттисем те ҫырнӑ ҫинтакҫиссене илсен, епӗр вӗсем ҫинтӑкҫисе кашни хайпӑр хӑй тӗрлӗ ӑнланнине куратпӑр: кашни вӗренӳҫӗ, ыттисене тиркесе, хӑй ҫырнине *„наутӑный ҫинтакҫис“,* тет. Вырӑс вӗренӳҫӗсем анҫах мар, Петтерссон каланӑ тӑрӑх, нимӗҫ вӗренӳҫӗсем те ҫинтӑкҫиса пур те пӗр пек ӑнланмаҫҫӗ. Апла пулсан, ҫӑваш ҫинтӑкҫисӗ ҫинҫен мӗн калас? Ҫӑваш ҫинтӑкҫисне ку таранҫҫен Н. И. Ашмарин кӑна ҫырнӑ, вӑл та пулин пӗтӗмпех пиҫитленсе пӗтмен-ха. Паллах пӗр ҫын ӗҫленнипех крамматтике пур йенҫен те тӗплесе ҫитерме ҫук. Ҫавӑнпа Н. И. Ашмарин ҫинтӑкҫисӗн пурнӑҫра ҫи кирлӗ ыйтӑвӗсене, тата ҫухалма пултаракан тӗлсене—ҫинтакҫис кӗлеткин пӗлтерӗшӗсене (функции синтаксических форм тийекевнисене) ҫасрах ҫырса хума тӑрӑшнӑ, кӗлеткисене кӑласлассн ҫинҫен питех тӑрӑшман.

Епӗр хамӑр ҫинтӑкҫисе шкул ваҫҫи, пуринҫен ытла вӗрентекенсем ваҫҫи маттерйал парас тесе, тӑрӑшса ҫыртӑмӑр. Вӗренмелли пӑлан мӗн ыйтаҭ, ҫавна ҫырма тӑрӑшрӑмӑр. Ҫак йенҫен пӑхсан та, каллах ку пирӗн ҫӑваш литтературӗнҫе ҫӗнӗ йапала. Ҫавӑнпа унта пысӑк йӑнӑшсем те пулма пултараҫҫӗ. Тепӗр йенҫен шухӑшласан, пӗтӗмпех килӗшекен клаҫҫификатси пулма та пултараймасҭ, мӗншӗн тесен, ҫӗлхе улшӑнса пынӑ майӗпе унӑн кӗлеткисем те улшӑнаҫҫӗ: пӗрисем малалла кайаҫҫӗ, теприсем вӑхӑтлӑха улшӑнмасӑрах йулаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах тата хӑш-хӑш авалхи кӗлеткесем те пулма пултараҫҫӗ.

Ку ҫинтăкҫис пире хамăра та питех кăмăла каймасть; пурин-ҫен ытла унта, истори елеменҫĕсем сахал пирки, ҫĕлхе ҫунлăн туйăнмасть, тата ҫĕлхенĕн хăш хăш пысăк уйрăмлăхĕсемех унта кĕмесĕр йулнă пулас. Ҫителĕксĕрри ҫапах ҫуккинҫен лайăх тесе епĕр ăна пиҫетлесе кăларма килĕшрĕмĕр. Тĕпĕр ҫаптарăмра ăна лайăхрах, ҫунлăрах туса кăларасса шанса тăратпăр.

Тĕл пулакан ҫĕнĕ терменсене ҫапла йышăнтăмăр:

*Сăмах майлашăвĕ*—словосочетание.

*Пуплев*—предложение.

*Йышлă пуплев*—Сложное предложение.

*Ҫум пуплев*—придаточное предложение.

*Пĕрлешнĕ пуплев*—слитное предложение.

*Каласа паракан пуплев*—повествовательное предложение.

*Кăшкăракан пуплев*—восклицательное предложение.

*Ыйтакан пуплев*—вопросительное предложение.

*Аслă ҫĕленсем*—главные члены.

*Кĕҫĕн ҫĕленсем*—второстепенные члены.

*Хуҫа, пуплев хуҫи*—подлежащее.

*Калав, пуплев калавĕ*—сказуемое.

*Тытăнсатăру*—управляющийся (дополнение).

*Хуҫапа калав ҫумĕ* (йапала ҫумĕ)—примыкающий к подлежащему и дополнению (определение).

*Калав ҫумĕ*—примыкающий к сказуемому (обстоятельство).

*Килĕшуллĕ ҫум*—приложение.

Т. Хĕветĕрĕ.

# Çинтăкçис тĕпĕсем

## 1 §. Çинтăкçис мĕн вĕрентни.

Çинтăкçис вăл крамматтик пайĕ. Вăл сăмахсем етем ђĕлхинђе пĕр пĕринпе йепле майлашни çинђен вĕрентет. Пĕтĕм çинтăкçисе илсен, вăл етем ђĕлхинђе тĕл пулакан пур сăмах майлашăвĕпе вĕсен пĕлтерĕшĕсене, тата *халђхи сăмах майлашăвĕсем ĕлĕкхи сăмах майлашăвĕсентђен йепле пулса пынине вĕрентет.*

Епĕр халĕ вулакан çинтăкçис пĕтĕм çинтăкçис мар. Унта ытларах тĕл пулакан сăмах майлашăвĕсене кăна пăхса тухнă, вĕсене те пулин кĕскенĕн кăна пăхса тухнă.

## 2 §. Сăмах майлашăвĕпе пуплев.

Таса уйра тӳлек çил пуçахсене хумхатаĭ. Пĕрре йăвăççем пĕр пĕринпе тавлашса кайнă. Пĕри йурлаĭ, тепри ташлаĭ. Курăксем симĕсленђĕç, ђеђексем усăннă пуçĕсене çĕклерĕç, йăвăççен тасалнă çулçисем ирĕклĕн сарăлса нӳрĕ сывлăша тӳртса çăтма пуçлаççĕ,—çакă пур те çуллахи ăшă çумăр хыççăн пулаĭ. Михетере çаратнă. Айук!

Çак *тĕслĕхсем* пур те сăмах майлашăвĕсем пулаççĕ. Пĕр сăмах майлашăвĕ тепĕр сăмах майлашăвĕпе пĕрлешме пултараĭ. Пĕр сăмахлă сăмах майлашăвĕ те пулма пултараĭ.

Вĕсем пур те шухăша пĕлтереççĕ.

Тата çак тĕслĕхсене илер.

| | |
|---|---|
| Ађасем, çырла, тат,<br>вăрман, кай, анђах,<br>çырла, пиç, пул. | Ађасем вăрмана çырла<br>татма кайнă. Анђах çырли пиçнĕ пулман. |

Кунта епĕр икĕ йенђе те тăхăршар сăмах куратпăр. Анђах сулахай йенђи сăмахсем пĕр пĕринђен уйрăм тăр̣аççĕ, вĕсем пĕр

пӗринпе майлашман. Сылтӑм йенԭисем пӗр пӗринге пӗрлешнӗ, икӗ шухӑша пӗлтереҫҫӗ. Пӗр шухӑшӗ—«Аԭасем вӑрмана ҫырла татма кайнӑ» тени, тепӗр шухӑшӗ—«Анԭах ҫырли пиҫмен пулнӑ», тени. Вӗсем те сӑмах майлашӑвӗ.

*Пӗр пӗринпе майлашса шухӑша пӗлтерекен сӑмахсене крамматтикре пуплев теҫҫӗ.*

Пуплев пулас тесессӗн, сӑмахсен йепле кирлӗ апла мар, крамматтӗк саккунӗсем тӑрӑх майлашмалла.

Унран пуҫне тата, пуплев пулса майлашнӑ сӑмахсен *сывлавлӑх пӗрелӗхӗпе инттонатси пӗрелӗхӗ* пур. Кашни пуплеве епӗр пӗре сывласа илнипе калатпӑр. Кашни пуплевӗн тата хӑйӗн инттонатси пӗрелӗхӗ пур, терӗмӗр. Ҫапла пӗрелӗх пур пирки, темиҫе сӑмах майлашӑвӗ пӗр пуплев—„йышлӑ“ пуплев пулма пултарат̆.

Тата пуплев пӗлтерекен шухӑш хӑй уйрӑм шухӑш, вӑл шухӑшӑн пӗр акԭӗ. Анԭах унӑн калавлӑхӗ, сывлалӑх пӗрелӗхӗпе инттонатси пӗрелӗхӗ пур пирки, ытла пысӑк пулма пултараймаст̆.

## 3 §. Пупллев уйрӑмӗсем.

Ҫын хӑй шухӑшне мӗнле каланинԭен пуплевсем виҫӗ тӗслӗ пулаҫҫӗ: каласа параканнисем, кӑшкӑраканнисем, ыйтаканнисем.

Вӗсене инттонатсирен те пӗлме пулат̆. Каласа паракан пуплев вӗҫӗнԭе сасӑ анат̆, ыйтаканнин вӗҫӗнԭе хӑпарат̆, кӑшкӑраканнин вӗҫӗнԭе йе пӗр пек пырат̆, йе хӑпарат̆, йе тата анат̆.

Иван ҫывӑрмаст̆. Лаша—выԭӑх. Кашкӑр—йӑтӑ майлӑ.

Иван ҫывӑрат̆-и? Хӑвӑр сыв-и? Аҫу ӑҫта? Ах, йепле вӑл!

Кай кунтан! Ат̆ӑр!

Каласа паракан йышлӑ пуплевсенԭе хӑшӗнԭе малтанхи пуплев хӑпарат̆, йулашки анат̆.

Хӗвел тухрӗ те, пур те савӑнса кайрӗ.

Епӗр ӗҫлекенни, есӗр ҫиӥекенни.

Кунта епӗр тӳрӗ патакпа сасӑ хӑш йенелле ҫӗкленнине, йе аннине кӑтартрӑмӑр. Анҭах калаҫнӑ ҭухне сасӑ патак пек тӳрӗ пымасӑ; кукӑркаланарах, выҭарах пыраӑ.

Пур ҫын та пӗр инттонатсипе калаҫмасӑ, тата пӗр пуплевех темиҫе инттонатси туса калаҫма пулаӑ. Ҫавӑнпа ҫакӑнта кӑтартнӑ инттонатси пуриншӗн те тӗрӗс пек туйӑнас ҫук.

Пуплевсене урӑхла та уйӑраҫҫӗ.

Ҫын хӑй шухӑшне ыттисене пӗлтерме тӑрӑшаӑ. Пӗлтерес тесе, вӑл хӑй шухӑшне хӑш ҭухне тӗплӗн, йӗрипе калаӑ; хӑш ҭухне тӗплӗн, йерипе калама май килмест, йе апла каламасӑрах шухӑш паллӑ пулаӑ. Ҫакӑн пирки пуплевсем кӗлетки йенҭен икӗ тӗрлӗ пулаҫҫӗ: тулли пуплевсем, тата тулли мар пуплевсем.

Пуплевсене туллипе тулли марри йенҭен уйӑрни ҫинтакҫисре ҭи пысӑк, ҭи кирлӗ уйӑру.

# I. Тулли пуплевсем.

## 4 §. Пуплев хуҫипе калавӗ.

Йӑтӑ вӗрет. Хӗвел пӑхрӗ. Вӑл ҫыраӑ-ҭӗ. Есӗ кай.

Ҫак пуплевсенҭе „йӑтӑ, хӗвел, вӑл, есӗ“ сӑмахсен йат вӗҫлевлӗхӗнҭе тӑраҫҫӗ. Вӗсене *пуплев хуҫи*, йе тӳрех *хуҫа* теҫҫӗ. „Вӗрет, пӑхрӗ, ҫыраӑ-ҭӗ, кай,“ сӑмахсем—ӗҫхӗлсем. Вӗсене пуплевре *пуплев калавӗ*, йе тӳрех *калав* теҫҫӗ.

Хуҫасем йат вӗҫлевлӗхӗнҭи йапала йаҭӗсем пулаҫҫӗ. Тата хуҫа пулма йапала йаҭӗ вырӑнне пулма пултаракан паллӑ йаҭӗсем, пайташсем те пултараҫҫӗ.

| | |
|---|---|
| Ҫӑмӑр ҫӑваӑ. | Ыйткалакан килҭӗ. |
| Епӗ вулатӑп. | Ыйтаканни килҭӗ. |
| Суккӑр курмасӑ. | Ыйтни йурамарӗ. |
| Кахалли йулҭӗ. | Ыйтассӑм килет. |

„Йара пар, ҫисе йар, пӗтсе лар, тухса кай, хӑраса ўк“ пек пулӑшу ӗҫхӗлӗсем пулсан, калав икӗ сӑмахлӑ пулат̆. Епӗ тухса кайрӑм. Халӑх хӑраса ўкнӗ. Иван курах кайрӗ. Ҫамрӑксем ташша йара паҭӗҫ. Лаша ҭупа паҭӗ, епӗ тӑрса йултӑм.

Тулли пуплевӗн калавӗ йаланах сӑпатланакан ӗҫхӗл пулмалла. Ҫавӑн пек ӗҫхӗллӗ калавсӑр пуплев тулли пулма пултараймаст̆.

## 5 §. Хуҫапа калав майлашни.

| | |
|---|---|
| Аҭа макӑрат̆. | Аҭасем макӑраҫҫӗ. |
| Вӑл илҭӗ. | Вӗсем илеҫҫӗ. |
| Епӗ кайрӑм. | Епӗр кайрӑмӑр. |
| Есӗ куратӑн. | Есӗр куратӑр. |

Ҫак тӗслӗхсенҭен акӑ мӗн курӑнат̆:

1. Хуҫапа калав йалан пӗр хисепре пулаҫҫӗ: йе иккӗшӗ те пӗрреллӗ хисепре, йе икӗшӗ те нумайлӑ хисепре.

2. Сӑпатлӑ йат вырӑнҭисем ӗҫхӗлӗн сӑпат сыпӑкӗсемпе майлашаҫҫӗ. Хуҫа пулакан вӗҫленекен сӑмахсем ӗҫхӗлсен виҫҫӗмӗш сӑпатне ыйтаҫҫӗ.

## 6 §. Пуплев ҭӗленӗсем.

Пуплев тӑвакан сӑмахсене пуплев ҭӗленӗсем теҫҫӗ. Тимӗр тылӑ тесенех, сехри хӑпат̆ инкесен. Ҫак пуплевре ултӑ ҭӗлен. Ыран ирех тӑр: тырӑ вырма каймалла. Ку пуплевре те ултӑ ҭӗлен.

Йӗнер аҭасем вӑрмана ҫырлана кайрӗҫ.

Аҭасем вӑрмана ҫырлана кайрӗҫ.

Аҭасем ҫырлана кайрӗҫ.

Аҭасем кайрӗҫ.

Хуҫапа калава *аслӑ ҭӗленсем* теҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем сӗр пуплев пулма пултараймаст̆. Ытти ҭӗленсене *кӗҫӗн ҭӗленсем* теҫҫӗ. Вӗсем пуплевре пулма пултараҫҫӗ, анҭах пуплев вӗсемсӗр те пулма пултарат̆.

## 7 §. Пуплеври ҭĕленсен хушши.

Пуплев илер: Кăвак кашкăрсем ĕнер лери вăрмантан каллех курăнҭĕҫ.

Халĕ ҫак пуплев ҭĕленĕсем хушшине пăхар.

Аслă ҭĕленсем—хуҫапа калав хушши ҫинҭен каланăҭҭĕ: вĕсем пĕр пĕринпе хисеп йенҭен, сăпат йенҭен килĕштереҫҫĕ; кунта та вĕсем ҫавах. Кĕҫĕн ҭĕленсене илсен, вĕсен ун пек килĕшӳ ҫук Вĕсен хушши урăхла. „Вăрмантан" ҭĕлен калавпа пĕрле; вăл туху вĕҫлевлĕхĕнҭе тăни калавран—„курăнҭĕҫ" сăмах кĕлетки тытăмĕнҭен килет. „Кăвак" ҭĕлен хуҫапа пĕрле—хуҫа ҫумĕ. „Лери" ҭĕлен тытăнса тăрупа пĕрле—тытăнса тăру ҫумĕ. „Ĕнер каллех", ҭĕленсем калавпа пĕрле—калав ҫумĕсем.

Ҫапла вара кĕҫĕн ҭĕленсем: тытăнса тăрусем, тата ҫумсем: хуҫа ҫумĕсем, тытăнса тăру ҫумĕсем, калав ҫумĕсем пулаҫҫĕ.

Ҭăваш пуплевĕн ҫхемине вара ҫапла тума пулаҭ:




## 8 §. Тытăнса тăру.

Ҫынсем *ыраша* тухрĕҫ.

Епĕр ĕнер ыраш выртăмăр.

Тырă вырма *ыраштан* пуҫлаҫҫĕ.

Ҫара *ырашпа* пурăнаймăн.

Пĕр пăт ырашшăн тăвată пăт *паранкă* параҫҫĕ.

Йатпа харкам вӗҫлевлӗхӗнҗен пуҫне, кунта епӗр „ыраш“ тӗпӗнҗен пулнӑ сӑмахсене тӗрлӗ вӗҫлевлӗхре куратпӑр. Кунта вӗсем пур те кӗҫӗн җӗленсем.

„Тухрӗҫ“ сӑмах ӑҫта тухнине кӑтартма ирӗксӗрех пару вӗҫлевлӗхне ыйтаҭ. „Выртӑмӑр“ сӑмах мӗн вырнине кӑтартма айӑплав вӗҫлевлӗхне ыйтаҭ. Тата ыттисем те ҫавӑн пекех леш, йе тепӗр вӗҫлевлӗхе ыйтаҫҫӗ. Ҫакӑн парши урлӑ вӗҫлевлӗхсенҗе пулакан кӗҫӗн җӗленсене тытӑнса—тӑру җӗленсем, йе тӯрех тытӑнса тӑрусем теҫҫӗ,*) мӗншӗн тесен, вӗсем ҫав, йе леш вӗҫлевлӗхре пулни тытса тӑракан сӑмахсенҗен килет. Ку тӗслӗхсенҗе „тухрӗҫ, хытса кайнӑ, пуҫлаҫҫӗ, пурӑнаймӑн“ сӑмахсем тытса тӑраканнисем; «ыраша, ыраш, ырашран, ырашпа, паранкӑ» сӑмахсем тытӑнса тӑраканнисем*).

## 9 §. Йунашар тытӑнса тӑру.

Епӗ пасартан ҫирӗм пуса икӗ тетраҭ илтӗм. Атте ӗнер пӗр купсана тырӑ сутрӗ. Петӗр Ивана симӗс хуплашкаллӑ кӗнеке паҗӗ.

Айӑплав вӗҫлевлӗхӗнҗи сӑмах йаланпа пӗрех калавпа йунашар пулаҭ. Калавпа йунашар тӑнӑран, ӑна *йунашар тытӑнса тӑру* теҫҫӗ; ытти тытӑнса тӑрусене *урлӑ тытӑнса тӑру* теҫҫӗ; мӗншӗн тесен, йунашар тытӑнса тӑру пулсан вӗсем калавран йунашарри урлӑ пулаҫҫӗ.

## 10 §. Хыҫлӑ тытӑнса тӑрусем.

Йухлӑх *тӑрӑх* шыв йухаҭ. Хӑй кӗтӗвӗ *патӗнҗе* аҗа шӑхлиҗӗ калаҭ. Епӗр ҫул *ҫине* тухрӑмӑр. Кӗтӳ *хыҫҫӑн* урампа хура тусан хӑпараҭ. Ҫул *урлӑ* вӗрен выртаҭ.

Йат хыҫӗсем пулсан, тытӑнса тӑрусем хыҫлӑ пулаҫҫӗ.

## 11 §. Мӗнле сӑмахсем тытӑнса тӑру пулаҫҫӗ.

Тул ҫутӑлнӑ вӑхӑтра кайӑк *ӗҫе* тытӑнаҭ. Мана *симӗссине* пар. Вӗренессинҗен ан хӑра. *Паракантан* ил.

---

*) Харкам вӗҫлевлӗхӗнҗи сӑмах тытӑнса—тӑру хисепне кӗмест.

а) Тытӑнса тӑрусем йапала йаӡӗсем, тата йапала йаӡӗ вырӑнне пулма пултаракан паллӑ йаӡӗсем, пайташсем пулаҫҫӗ.

у) Тытӑнса тӑрусем—иккӗмӗш вырӑнти йапала йаӡӗсем; пӗрӗмӗш вырӑнти йапала йаӡӗсем—хуҫасем.

## 12 §. Хуҫа ҫумӗпе тытӑнса тӑру ҫумӗсем.

*Хура* пир *шурӑ* пиртен хаклӑрах. Хура лаша ҫилхине *йӗс* турапа тураҫҫӗ. *Ҫӳлӗ* вӑлак патӗнӡе *ватӑ* йӑмра йешӗрет. *Килти* тавар пасартинӡен ҫирӗп. *Ирхи* ӗҫ ӑнса пырай. Кӗркури *виҫӗ* пӑт йӑтаймасӑ. Вӑл *виҫҫӗмӗш* парттӑра лараӑ.

„Хура, шурӑ, йӗс, ҫӳллӗ, ватӑ, килти, ирхи, виҫӗ, виҫҫӗмӗш" сӑмахсем кӗҫӗн ӡӗленсем. Вӗсем йапаланӑн паллине (хура), вырӑнне (килти), вӑхӑтне (ирхи), хисепне (виҫҫӗ), йӗркине (виҫӗмӗш), тата ыттисене те пӗлтереҫҫӗ, хӑйсен хыҫӗнӡи сӑмах ҫумӗсем пулаҫҫӗ.

## 13 §. Мӗнле сӑмахсем йапала ҫумӗсем пулаҫҫӗ*).

*Кӑвак* пӗлӗт ҫӗре ҫӳлтен карса тӑраӑ. Пӗӡӗк *пиӡи* ҫӑпата тӑваӑ. *Пиҫи-пиҫми* ҫырлашӑн ӡӗрес ҫакса ан тухӑр. Вӗсем виҫҫӗмӗш ҫуртра пурнаҫҫӗ. Хирти тырӑсене пуҫтарса пӗтертӗмӗр.—Кунта йапала ҫумӗсем паллӑ йаӡӗсем, сумсем пулаҫҫӗ.

*Ӡукун* ҫулпа ҫӳреме йӳн тӑраӑ. *Тимӗр* йапала йӑвӑҫ йапаларан хаклӑ тӑраӑ. Епӗ *Иван* пиӡи патӗнӡе лартӑм. Икӗ пӑт ыраша *виҫӗ* тенке сутса йатӑм.—Кунта йапала ҫумӗсем—йапала йаӡӗсем, тата шут сумӗсем.

Лашанӑн апаӡӗ пӗтнӗ. Епӗ унӑн кӗнекине илтӗм. Епӗр ӗнер хир мулкаӡи куртӑмӑр.—Кунта йапала ҫумӗ—харкам вӗҫлевлӗхӗнӡи сӑмах: тулли кӗлеткелли те, тулли мар кӗлеткелли те.

Ҫапла вара акӑ мӗн курӑнаӑ: йапала ҫумӗсем—паллӑ йаӡӗсем, пайташсем, сум йаӡӗсем, тата хӑш хӑш йапала йаӡӗсем пулаҫҫӗ.

*Хушса калани.* Пӗр йенӡен пӑхсан, харкам вӗҫлевлӗхӗнӡи сӑмах тытӑнса тӑру тухаӑ, мӗншӗн тесен, унӑн кӗлетки хӑй хыҫӗн-

*) Хуҫа ҫумӗпе тытӑнса тӑру ҫумне кӗскенӗн й а п а л а ҫ у м ӗ тетпӗр.

ҫи сӑмахран килет. Анҫах ытти йенҫен пӑхсан, вӑл хуҫа, йе тытӑнса тӑру ҫумӗ. Вӑл акӑ мӗншӗн апла тухать:

а) Тытӑнса тӑрусен кӗлетки калавран килет, харкам вӗҫлевлӗхӗнҫи сӑмах кӗлетки хуҫаран, йе тытӑнса тӑруран килет.

у) Йапала ҫумӗсем хуҫапа, тата тытӑнса тӑрупа пӗрле; харкам вӗҫлевлӗхӗнҫи сӑмах та ҫавӑн пек.

ы) Йапала ҫумӗ— пуринҫен ытла паллӑ йаҫӗ. Вӑл пуплевре калав ҫумӗ те пулма пултарать: Хӗветӗр *лайӑхӑн* калаҫать. Ҫавӑн пекех харкам вӗҫлевлӗхӗнҫе сӑмах та калав ҫумӗ пулма пултарать. Лукка *кашкӑрӑн* пӑхать.

ӑ) Йапала ҫумӗсен пуплевре вӗҫлевлӗх сыпӑкӗ ҫук. Ҫавӑн пек харкам вӗҫлевлӗхӗнҫи сӑмахӑн та нумайӗшӗн вӗҫлевлӗх сыпӑкӗ пулмасть: Лаша апаҫӗ пӗтнӗ. Вӑрман хуралҫи килҫӗ.

е) Нумай вӗренӳҫӗсем каланӑ тӑрӑх, халӗ таса паллӑ йаҫӗсем ӗлӗк таса йапала йаҫӗсемех пулнӑ. Пурӑна киле вӗсем хуллен хӑйсен ирӗклӗхне ҫухата пуҫланӑ, ытти йапала йаҫӗсем умӗнҫе кӑна тӗл пула пуҫланӑ. Ытти йапала йаҫӗ умӗнҫе тӑрсан, вӗсем малтан харкам вӗҫлевлӗхӗнҫе пулнӑ, кайран харкам вӗҫлевлӗх сыпӑкне ҫухатнӑ, йулашкинҫен таса паллӑ йаҫӗсемех пулса кайнӑ. Ҫӑнахах вӑл ҫапла пулнине ҫӑваш ҫӗлхинҫе таса йапала йаҫӗсемпе таса паллӑ йаҫӗсем хушшинҫе тӑракан сӑмахсем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ*).

Ҫапла пулсассӑн, харкам вӗҫлевлӗхӗнҫи сӑмах пуплевре халӗҫҫен те хӑйӗн авалхи кӗлеткине ҫухатман йапала ҫумӗ пулать.

Ҫапла шухӑшласан, кӗлетке паллисем йенҫен пӑхсан та, харкам вӗҫлевлӗхӗнҫи сӑмах йапала ҫумӗ тухать.

## 14 §. Калав ҫумӗсем.

Пирӗн атте *ир ирех* тӑрать. *Ҫавӑнтан кайран* епӗр аван пурӑна пуҫларӑмӑр. Манӑн *халтҫен* куҫ пӑсӑлман-ҫӗ. *Куллен ирех* ҫавӑнта Сетнер Нарспийе кӗтет. Кӑвакал апат *пит нумай* ҫийет-

*) Т. Хӗветӗрӗ. Ҫӑваш ҫӗлхийӗн крамматтикӗ. 137 §, 4.

Аӡа *лашалла* выӡаӗ. Ҫарамас ҫын нӳре *тӡасах* сисет. *Сасартӑк* йӑтӑсем вӗрсе йаӡӗҫ. Митри *тӑрса* ҫыраӗ. Йаккусем *кула кула* ҫийеҫҫӗ.

Кунта ҫырнӑ пек ӳкернӗ сӑмахсем ӗҫхӗл ҫумӗсем. Пуплевре вӗсем калавпа пӗрле пулаҫҫӗ, анӡах унран тытӑнса тӑмаҫҫӗ, унпа пӗрле кӑна пулаҫҫӗ.

*Хушса калани:* Ӡас-ӡасах ҫак ҫумсем калавпа пӗрле мар, ытти ӡӗленсемпе пӗрле пулма та пултараҫҫӗ (17-§).

Епӗр к ӑ н а килтӗмӗр. Хытӑ кӑшкӑракан ӡас ӡасах ҫийеле тухаӗ. Ӡ а с ҫыракан нумай ҫыраӗ.

К у н т а ҫ а в й ы ш ш и ҫ у м с е м е х х у ҫ а п а п ӗ р л е. Хуҫапа пӗрле пулакан ҫум тытӑнса тӑрупа пӗрле пулма та пултараӗ.

Пире к ӑ н а курӡӗҫ. Х ы т ӑ кӑшкӑраканӑн сасси ҫӗтмӗ. Ӡ а с ҫыракана ӗҫ нумайрах пар.

*Иккӗмӗш хушса калу*: Йапала ҫумӗсем йапала паллине, ырӑнне, вӑхӑтне, хисепне пӗлтереҫҫӗ. Калав ҫумӗсем, калав паллине, ырӑнне, вӑхӑтне, хисепне, тата ыттисене те пӗлтереҫҫӗ:

Ҫӑмӑр х ы т ӑ ҫаваӗ. Аӡасем т а ҫ т а ҫӳреҫҫӗ. У н ӡ у х н е т и н сивӗ пулнӑ. Вӑл ӑна пуҫран и к ӗ х у т ш а к к а р ӗ.

## 15 §. Суппинсем йапала йаӡӗсем ырӑнне пулни.

Ӡӑваш ӡӗлхинӡи суппинсем авалхи кӑтартусӑр тайӑмран пулнӑ. Ытти тӗрӗк ӡӗлхинӡе кӑтартусӑр тайӑм аплипех йулнӑ. Вӑл йапала йаӡӗ пекех вӗҫленет. Ӡӑваш ӡӗлхинӡе суппинсем вӗҫленмеҫҫӗ. Ҫапах ӡӑваш ӡӗлхинӡе ӗлӗк кӑтартусӑр тайӑм пулнипе, вӑл вӗҫлӗленнине епӗр пӗлме пултаратпӑр. Пӳлмек йе пӳлме, пӗрмек йе пӗрме, ӡӳклеме, каҫма, пусма, ӗҫме-ҫиме (еда-питье) сӑмахсене илер. Вӗсем „пӗр, пӳм, ӡӳкле, пуҫ, каҫ, ӗҫ, ҫи" сӑмахсенӡен пулакан кӑтартусӑр тайӑм, йе суппин. Халӗ вӗсем ӗнтӗ пирӗншӗн таса йапала йаӡӗсемех.

Ытти тёпсенђен пулна суппинсем йапала йађесем пулмаççё, анђах вёсем пуплевре йапала йађёсем выранне пулса хуçа та, тытанса тару та пулма пултараççё.

Канма пулмарё. Вилме патне çитрёмёр. Иван çырма пёлет.

## 16 §. Умлă калавсем.

4-ш §-ра епёр калав икё сăмахла пулма пултарнине куртамăр. Пулăшу ёçхёлё пулсан, калав та ик сăмахла пулаť. Шывра ку хăй мёлкине курах кайрё. Есё тутарла та йара паратăн. Вăйăм йалтах пётсе çитрё.

Кун пек калавсенђен пуçне, тата урăхла калавсем *умлă калавсем* пур:

а) Епё вăрмана *кайнă пулăттăм та,* лаша çукки пăђларё. Ку ёçе епёр *тунă пулаť* вара.

Кунта ахађ ёçхёл хыççăн пулăшу ёçхёлё—„пул" сăмах хушăнаť. Вăл хăватла ёçхёлех мар, пёђђен калав пулма пултараймасť.

у) Иван *упи пултђё*, епё *йăтти пултăм.* Ку каллех *кётўçё пулаť.* Вăл *пуçлăх пулаť.*

Кунта *пул* умён йапала йађёсем тăраççё.

ы) Ёнер çанталăк *аван пултђё.* Çурăм пуçё *çапçута пулнă*. Вăл килте *çук пулаť.* Аçу тен *кăмăллă* та *пулё-ха.*

Кунта *пул* умён паллă йађёсем хутшăнаççё.

ă) *Пуртђё* унăн кађака, икё сурăх, пёр путек. Пирён вăкăр *пит усалтђё.* Вăл ёлёк *пуп-тђё.* Хăй тем те *тăвёттђё.* Çав вăрмана кёнё çын пирён ђăваш *Сетнер-тђё.*

Кёсенђи калав—çителёксёр ёçхёл—*тђё,* тата ун умёнђи сăмах

## 17 §. Пуплевле ђёленсем.

Ађасем вăрмана çырлана кайаççё.
Ађасем вăрмана çырлана кайрёç.
Ађасем вăрмана çырлана кайнă.
Ађасем вăрмана çырлана кайса-ђђё.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнӑ-ҫҫӗ.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайни.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайӗҫ.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайасси.

*Пирӗн ӗне хӗрлӗ.* *Пирӗн ӗне иккӗ.*

Пирӗн ӗне хӗрли. Пирӗн ӗне икки.

Кунта епӗр тӗрлӗ пуплевсен ҫумне уйӑрса илнине кӑтартакан виҫҫӗмӗш сӑпатӑн сыпӑкне—И сасса хушса пуплевле сӑмахсем тӑватпӑр.

Пуплевре вӗсем пуплевле ҫӗленсем пулса хуҫа та, тытӑнса тӑру та пулма пултараҫҫӗ:

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайни пит усӑллӑ пулҫӗ. Пирӗн ӗне хӗрли никама та сийен тумасӑ. Пирӗн ӗне хӗрлийӗ санӑ мӗне кирлӗ пулҫӗ? Ҫынсем пирӗн ӗне хӗрли ҫинҫен калаҫаҫҫӗ. Епӗр аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнине куртӑмӑр. Аҫасем вӑрманта ҫырла татнинҫен (татнӑран, татасран) мӗн хӑрасси пур.

Хӑш тӗлсенҫе И сасӑ пулмасӑ, тухса ӳкет пулмалла. Мускава лекесшӗн пулӗ. Есӗ Мускава лекессе ан ӗмӗтлен. Хӗвел анаӑ. Хӗвел анаспа киле ҫитрӗмӗр. Утӑ ҫулма йавӑр. Утӑ ҫулма йавӑртан ан хӑра. Епӗ килтен тухрӑм. Епӗ килтен тухнӑранпа вуна ҫул иртрӗ.

Пуплевле ҫӗленре сӑмах йӗрки улшӑнма пултараӑ: Пирӗн йысна икӗ ҫул мунҫа кӗмен. Пирӗн йысна хупхура, икӗ ҫул мунҫа кӗментен. Такам укҫа хисеплесе лараӑ. Ҫӗнҫул каҫхине такам укҫа хисеплесе ларнине курни—пуйасса. (Кунта миҫе пуплевлӗ ҫӗлен?). Ыран шӑмат кун. Ыран шӑмат кунни маншӑн питех мар.

II.

Иван пулӑ тытат. { Иван тытакан пулӑ. Пулӑ тытакан Иван.

Иван пулӑ тытнӑ
Иван пулӑ тытрӗ
Иван пулӑ тытнӑ-ҫҫӗ
Иван пулӑ тытса-ҫҫӗ.
{ Иван тытнӑ пулӑ. Пулӑ тытнӑ Иван.

Иван пулӑ тытӗ { Иван тытас пулӑ. Пулӑ тытас Иван.

*Усламҫӑ хулана кайнӑ.*

Хулана кайнӑ усламҫӑ.

Усламҫӑ кайнӑ хула.

*Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнӑ.*

Вӑрмана ҫырлана кайнӑ аҫасем.

Аҫасем ҫырлана кайнӑ вӑрман.

*Ҫынсем аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнине курнӑ.*

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнине курнӑ ҫынсем.

Ҫынсем курнӑ вӑрмана ҫырлана кайакан аҫасем.

Кунти пуплевре ҫӗленсем сӑмахсене улӑштарса лартнӑран пулаҫҫӗ. Вӗсем хуҫасем те, тытӑнса тӑрусем те пулаҫҫӗ. Йулашки сӑмах умӗнҫисем, тата йапала ҫумӗсем пулаҫҫӗ.

III.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайаҫҫӗ.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайнӑ.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайӗҫ.

Аҫасем вӑрмана ҫырлана кайакан.
" " " кайвӑ.
" " " кайас.
" " " каймалли.
} вӑхӑт, вырӑн, ҫул.

Аҫасем вăрмана ҫырлана кайакан ҫул ıасăлнă. Аҫасем... кайас ҫул ҫинҫе кашкăр тăнă. Аҫасем... кайнă вăхăтра ҫумăр пулнă. Аҫасем... кайнă пирки киле никам та йулман. Аҫасем... кайас умĕн ҫумăр ҫунă. Аҫасем... кайас выранне шыва кĕме кайнă.

Кунти пуплевре ҫĕленсем—пуплевле йапала ҫумĕсем.

## IV.

Аҫасем ҫырлана кайнă ҫух вăйлă ҫумăр ҫунă.
Аҫасем ҫырлана кайнă ҫухлĕ есĕ ҫăпата та туман.
Аҫасем ҫырлана кайнă ҫемĕн кайарах панă.
Ăстсенăра аҫасем ҫырлана кайнă пек хăтланнă.
Аҫасем ҫырлана кайиҫҫен шыва кĕрсе тухнă.
Аҫасем ҫырıана каймассерен пилĕкшер кĕрепенке ҫырла тупнă.
Аҫасем ҫырлана кайсассăн ҫухалса кайнă.
Аҫасем ҫырлана кайма пĕрне хатĕрленĕ.
Аҫасем ҫырлана кайса апатсăр тăрса йулнă.

Уйкассем тырă вырса пĕтернĕ.
Аҫасем вăрмантан ҫырла татса килнĕ.
Аҫасем вăрмана ҫырла татма кайнă.

Кунта пуплевле ҫĕленсем калав ҫумĕсем пулаҫҫĕ.

---

Пуплевле ҫĕленĕсене тимлерех пăхсан, тата акă мĕн куратпăр.

а) Пуплевпе пуплевле ҫĕленĕн те хуҫи пĕр сăмахах пулсан, ăна пĕтĕм пуплевре пĕре кăна калаҫҫĕ.

Аҫасем ҫырлана кайма пĕрне хатĕрıенĕ.
Аҫасем ҫырлана кайса апатсăр тăрса йулнă.
Аҫасем ҫырлана кайиҫҫен шыва кĕрсе тухнă.

Ку пуплевсенђе пĕр хуçа кăна. Апла пулсан. пуплевле ђĕлен вырăнне улăштарма пултарать: Çырлана кайма ађасем пĕрне хатĕрленĕ; тата ыттисем те.

Пуплевпе пуплевле ђĕленĕн хуçи иккĕ пулсассăн, пĕтĕм пуплевре вĕсем иккĕшĕ те пулаççĕ: Ађасем çырлана кайнă ђух, çумăр çунă. Ађасем çырлана кайсассăн, епĕр выртса кантăмăр

у) Пуплевпе пуплевле ђĕленĕн калавĕ пĕр сăмах пулсан, пĕтĕм пуплевре пĕри тухса ӳкме пултарать: Ађасем кашкăр уланă пек уланă—ађасем кашкăр пек уланă. Çуркуннехи ђеђек илемлĕ, —Сарă хĕр çуркуннехи ђеђек пек илемлĕ. („Сарă хĕр çуркуннехи ђеђек илемлĕ пек илемлĕ“ вырăнне).

ы) Пуплевле ђĕлен нумайăшĕ калав пулма пултарать: Ку—ађасем çырлана кайни пулнă вара. Мартăн саккăрмăш кунĕ—пĕтĕм тĕнђери ĕçлесе пурăнакан хĕрарăмсен ирĕкпе танлăх уйавĕ. Кăвакал пит нумай çийекен кайăк.

ă) Вырăс ђĕлхинђе пуплевле ђĕленсем вырăнне нумайăшĕнђе çум—пуплевлсем пулаççĕ:

Вăрмана çырлана кайнă ађасем таврăнђĕç—Дети, которые пошли в лес за ягодами, возвратились. Ађасем вăрмана кайнă пирки, киле никам та йулман.—По причине того, что дети пошли в лес, дома никого не осталось. Ађасем çырлана кайсан, çăмăр çунă—когда дети пошли в лес, был дождь. Çырлана кайма ађасем пĕрне хатĕрленĕ—чтобы идти за ягодами, дети приготовили кузовья.

Хушса калани: Ађасем çырлана кайиђђен... каймассерен... кайнăçемĕн.. кайсассăн... пек сăмах майлашĕвне епĕр пуплев теме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен, унта калав—сăпатланакан ĕçхĕл çук, тата инттонатси пĕрелĕхĕ те çук Çавăнпа çавăн пек сăмах майлашĕвĕсем нийепле пуплев те пулмаççĕ, вĕсем пуплевле ђĕленсем кăна.

## 18 §. Килĕшӳллĕ çумсем.

Вĕсем, тăваттăнскерсем, вĕлерсе те пăрахĕç сынна. Вăл, ухмах, тем те тăвĕ. Ăна ухмаха, тем те тăвĕç. Вĕсене,

ухмахсене, улталарăмăр. Ăна, çул кайаканскере, хăнакилне кăтартса йанă. Вĕсенҫен пĕри, хăрах куçли, ытла та кутăн пулнă. Пире, лашасăрсене, ака-суха тăвасси пит хакла ӳкет.

Кунта „тăваттăнскерсем, ухмах, ухмаха, ухмахсене, çул кайаканскере, хăрах куçли, лашасăрсене,“ сăмахсем хăйсен умĕнҫи сăмахпа пĕрле унăн пĕлтерĕшне уйăрарах тăраççĕ, тата унпа вĕçлевлĕх, хисеп йенҫен килĕштереççĕ. Çавăнпа вĕсене килĕшӳллĕ çум теççĕ.

Килĕшӳллĕ çумсем хуçасем, тытăнса тăрусем хыççăн анҫах мар, калав çумĕсем хыççăн та пулма пултараççĕ: кунта та вĕсем хăйсем умĕнҫи сăмах пĕлтерĕшне уçарах параççĕ, унпа пĕр йышши пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ: Епĕ пĕре, пилĕк çулта ҫухне, кăмака çинҫен ӳкрĕм. Вĕсем вăрттăн, никам сисейми, тухса кайнă. Вăл çĕр çинҫе нумай, çĕр çул ытла, пурăннă.

## 19 §. Пуплев çумĕсем.

Ватăлнă ĕçке есĕ, асатте! Çук, сиртен ҫейе пулаймăн. Ах, çылăхлă ҫунăма ăçта кайса хурам-ши! Тухман çын тухсан тăман тухат, тет.

„Асатте, çук, ах, тет“ сăмахсем пуплеври пĕр сăмаха та пăхăнмаççĕ, хăйсен ирĕккĕн тăраççĕ. Çавăн пек хăйсен ирĕккĕн тăракан сăмахсене тăватта уйăрма пулат: ҫĕнӳсем, ҫĕвĕсем, пурпа çук йышши сăмахсем, тата кĕрселарусем.

а) *Ҫĕнӳсем*: Ей хăта, тулҫĕ-и кăмăлăр? Сĕм сĕм вăрман, сĕм вăрман, мĕншĕн хытă шавлатăн? Асту, Нарспи, йĕвенӳ ман алăра малашне! Ес ҫĕнтĕн те, тăван, епĕ ҫĕнмерĕм: çиленсе марçке, вăтанса.

е) *Ҫĕвĕсем*: Ну, аҫăм, пĕтрĕ пирĕн пурăнăç! Йе-йе, усал, ытлашшин ан кар ĕнтĕ çăварна! Айуй, мĕн пулҫех сире!

у) *Пурпа çук йышши сăмахсем.* Çук, кашкăр, мана есĕ аплa ырă сунса ҫĕнместĕн. Пур, анҫах килҫĕ, апат çисе ларат.

Айук пымастăп. Ара, манăн йулашки укçана та илетĕн-ĕçке есĕ! Ийа, вăл ҫăнахах хытă ĕçлет.

Пурпа çук йышши сăмахсем пурпа çуккине, килĕшнипе килĕшменнине пĕлтереççĕ.

ӳ) *Кĕрселарусем.* Калăпăр, манăн çĕр тенкĕ укçа пур. Сăмахран, унăн пилĕк лаша пултăр. Епĕ лаши пулап тийĕ, есĕ çын пул тийĕ. Йĕре йĕре ĕçлекен кула кула çийет, тет. Вăл килнĕ-и тен. Ҫăнах та, вăл хитре çыраҫ. Ҫӳрекен çын, паллă, пӳре кайсан, таçта та çитсе килет.

## 20 §. Пĕрлешнĕ пуплевсем.

Мулкаҫа çынсем те, йăтăсем те, кашкăрсем те, çăхансем те тытаççĕ. Çынсем хăйсем валли çуртсем, хуласем, ҫукунçулсем тăваççĕ. Ваçили ҫăвашла, вырăсла, тутарла калаçаҫ. Вырăмара аҫасем йурлаççĕ, выҫаççĕ, ташлаççĕ. Тĕс шурă, хура, хĕрлĕ, симĕс, кăвак пулаҫ.

Кунта пурĕ пилĕк пуплев. Малтанхи пуплевре тăвата хуçа. Иккĕмĕш пуплевре виçĕ йунашар тытăнса тăру. Виççĕмĕшĕнҫе виçĕ пĕр ыйтуллă калав çумĕ. Тăваттăмĕшĕнҫе виçĕ калав. Пиллĕкĕмĕшĕнҫе пилĕк калав.

Пĕр пĕр пуплевре пĕр йышши ҫĕлен темиçе пулсан, тата вĕсем пĕр ыйтуллă пулсан, ун пек пуплеве *пĕрлешнĕ пуплев* теççĕ. Пĕрлешнĕ тенĕ сăмах кунта акă мĕнле тухса кайнă тесе шухăшлама пулаҫ.

Сăмахран, виçĕ пуплев илер: хут шурă пулаҫ, хут сарă пулаҫ. Хут симĕс пулаҫ. Çав виçĕ пуплевре пуринĕн те пĕр хуçа. Йунашарах вĕсене апла калама економи йенҫен усăллă мар. Çавăнпа вара ун пек ҫухне виçĕ пуплев вырăнне пĕр пуплев кăна калаççĕ: хут шурă, сарă, симĕс пулаҫ, тесе. Ку вара пĕрлешнĕ пуплев пулаҫ.

## 21 §. Йышлă пуплев.

Шăнкăр-шăнкăр шыв йухаҫ, шăнкăрҫ ҫĕппи шыв ĕçет. Ҫӳреҫерен пыра пăхатăп; пӳртре пĕр карҫăк кăна лараҫ. Пуш уйă-

хăн вĕçĕнҫе хĕвел пăхрĕ ăшăтса, Çилпи ҫăваш йалĕнҫе йур ирĕлҫĕ васкаса. Хĕвел анса пытанаĭ, Çилпи йалĕ лăпланаĭ. Иртрĕ çимĕк, иртрĕ туй, иртрĕ туйри савăнăç.

Кунта пурĕ пилĕк пуплев. Малтанхи тăватă пуплевре икшер пуплев, йулашки пуплевре виçĕ пуплев. Кашни пуплевĕн хăйĕн хуçи, хăйĕн калавĕ пур.

Пĕр мăн пуплевре темиçе пуплев пулсассăн, ун пек пуплеве йышлă пуплев теççĕ. Йышлă пуплевре ахаҫ пуплев иккĕ те, виççĕ те, тата ытла та пулма пултараĭ.

Йышлă пуплев çавах пĕр пуплев, мĕншĕн тесен, унта инттонатси пĕрелĕхĕ пĕре.

1. Халĕ калана йышлă пуплевсенҫе ахаҫ пуплевсем пĕр пĕринпе тӳрех йунашарланнă.

2. Хăш йышлă пуплевре ахаҫ пуплевсем хушшине пĕтĕçтерӳсем кĕрсе лараççĕ: Епĕ мăнтăрланап та, есĕ вара мана çийен. Салтак кукша пуçа кăкшăмпа çапаĭ те, кукша пуçĕ саланаĭ кайаĭ. Пирĕн йысна аванни аван çын та, анҫах ытла та çемçе кăмăллă. Сан патна çыру çырас теттĕм те, анҫах вăхăт пулмарĕ.

3. Хăш йышлă пуплев акă мĕнле пулаĭ: пуплевле ҫĕлен вырăнне пуплевĕ хăй пулаĭ, анҫах вăл хăй (локик йенҫен, крамматтик йенҫен мар) ирĕклĕ ҫĕлен пулаймасĭ, тĕп пуплевин пĕр пĕр ҫĕленне парăнса тăраĭ. Çавăн пек пуплеве *çум—пуплев* теççĕ.

Вăрттăн куç хĕсекен усал шухăш тытаĭ.

Ĕне пуррин сĕт те пур.

Хĕлле Атăлăн сач пулакан йенҫе тырă аван пулаĭ, теççĕ.

Пыл касмăкĕ çумĕнҫе шăнатараккан кускаланă пек, ман тавра (йатне кала) кускалатăр.

Вĕри çу çумĕнҫе пăр ирĕлес çук ҫухне, çак çуртран пăсташ тухтăр.

Кам вăрттăн куç хĕсет, çав усал шухăш тытаĭ.

Камăн ĕне пур, унăн сĕт те пур.

Хĕлле Атăлăн хăш йенҫе сан пулаĭ, çав йенҫе тырă аван пулаĭ, теççĕ.

Йепле пыл касмăкĕ çумĕнҫе шăна-тараккан кускалаĭ, çавăн пек (йатне кала) тавра кускалатăр.

Вĕри çу çумĕнҫе хăçан пăр ирĕлмĕ, çавăн ҫухне çак çуртран пăсташ тухтăр.

Кунта ҫум пуплев малтанхи тĕслĕхре тĕп пуплевин хуҫине пăхăнса тăрать; иккĕмĕш тĕслĕхре тытăнса тăрăва пăхăнса тăрăва, тăваттăмĕшĕнҫе калав ҫумне, пиллĕкмĕшĕнҫе вăхăт-ҫума пахăнса тăрать.

Йышлă пуплевре пĕр пуплевĕ локик тĕлĕшĕнҫен тепĕр пуплевĕ пăхăнса тăрасси ҫăваш ҫĕлхине вырăс ҫĕлхинҫен куҫнă пулмалла. Таса ҫăваш ҫĕлхинҫе йышлă пуплевре ҫум—пуплев ҫук.

Халĕ асăннă пуплевсене „йышлă“ пуплев тесе, епĕр услови туса—пуплев пулăвне пăхса кăна калатпăр; ҫăннине каласан, вăл пĕр пуплев кăна, мĕншĕн тесен, унăн интонатси пĕрелĕхĕ пĕре кăна, ҫырасса ҫавăнпа ăна пĕр пăнҫă туса кăна ҫыратпăр. „Йышлă“ пуплеве кĕнĕ ахаҫ пуплев—пуплев мар, пĕр сăмах майлашăвĕ кăна, мĕншĕн тесен, ҫав „йышлă“ пуплевре ҫухне, унăн интонатси перелĕхĕ ҫук.

## 22 §. Йут сăмахлă пуплевсем.

Суккăр ҫуралнă ҫын куҫлă ҫынна каланă: Сĕт мĕн тĕслĕ вăл? тенĕ. Куҫли калать: Сĕт шурă, хут пек шапшурă, тет.

Кунти сăмахсене икĕ пайа уйăрма пулать: „Суккăр ҫуралнă ҫын куҫлă ҫынна каланă,“ „Куҫли калать,“ тата „тенĕ“ сăмахсене автор хăй калать. Вĕсене *автtăр сăмахĕ* теҫҫĕ.

„Сĕт мĕн тĕслĕ вăл,“ „сĕт шурă, хут пек шапшурă“ сăмахсем автор сăмахсем мар, автtăр вĕсене ыттисенҫен илтнĕ пек ҫырать. Вĕсене *йут сăмахсем* теҫҫĕ.

Кӳнĕ тĕслĕхсенҫе „каланă, калать“ сăмахсем йут сăмах умĕнҫе тăраҫҫĕ. Вĕсем хыҫалта тăма та, тухса ӳкме те пултараҫҫĕ. Хыҫалта тăрсассăн „тенĕ, тет, терĕ, теҫҫĕ“ вырăнне „тесе“ те пулать.

Суккăр ҫуралнă ҫын куҫлă ҫынна: Сĕт мĕн тĕслĕ вăл? тенĕ. Куҫли: Сĕт шурă, хут пек шапшурă, тенĕ.

Кунта „каланă, калать“ сăмах тухса ӳкет.

Суккăр ҫуралнă ҫын куҫлă ҫынна: Сĕт мĕн тĕслĕ вăл? тесе каланă. Кунта „каланă“ сăмах хыҫала куҫса ларать.

Йут сӑмах пулма ҫӗлхере пур пуплев те пултарать: тулли пуплев те, тулли марри те, хӑш ҫухне темиҫе пуплев те, пӗтӗм статйа та йут сӑмах пулать.

## 23 §. Сӑмахсем йунашарланни.

Пирӗн пуртӑ.
Сармантейӗн ҫӑххи.
Аҫасен сасси.
Лаша апаҫӗ.
Сурӑх ҫӑмӗ.

Симӗс курӑк.
Хура лаша.
Кайас ҫул.
Вуланӑ кӗнеке.
Хӗветӗр пиҫи.

Лайӑх ҫырнӑ.
Хайаррӑн кӑшкӑрнӑ.
Пӗтӗмпех ывӑтса йанӑ.
Нумай ҫийет.
Хӑҫан пулать.
Лаша ҫийет.
Тырӑ ӳсет.

Лаша патне.
Ана ҫинҫен.
Вӑрман умӗнҫе.
Йала хирӗҫ.
Карта урлӑ.

Икӗ пӑт.
Виҫӗм ҫул.
Вуннӑмӗш вырӑн.
Ҫирӗммӗш кун.
Ҫирӗммӗш пӑт.

Ыраш сутма.
Кӗнеке илме.
Киле кайсан.
Тырӑ сутса.
Пасара кайиҫҫен.
Ҫырма йухать.
Ӗне—хура.

Ҫаваш ҫӗлхийӗн сӑмах йунашарлӑхин тӗп саккунӗ ак ҫапла: *пӑхӑнакан сӑмах пӑхӑнтаракан сӑмах умӗн пулать.*

Ҫакӑн пирки:

а) Харкам вӗҫлевлӗх хӑйне тытса тӑракан сӑмах умӗн пулать.

е) Хыҫсем вӗҫленекен сӑмах хыҫҫӑн пулаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, сӑмах леш, йе ҫав вӗҫлевлӗхре пулни хыҫсенҫен килет: хыҫсем тытса тӑраканнисем.

у) Паллӑ йаҫӗсен, пайташсем, пӑхӑнса тӑран йапала йаҫӗсем. Сумсем хӑйсене пӑхӑнтаракан сӑмах умӗн тӑраҫҫӗ.

ӳ) Ӗҫхӗл ҫумӗсем (йаланах мар) ӗҫ хӗл умӗн пулаҫҫӗ.

и) Йапала йаҫӗсем хӑйсене тытса тӑран ӗҫхӗл умӗн, йе ӗҫхӗлрен пулнӑ ӗҫхӗл ҫумӗсем умӗн тӑраҫҫӗ.

## 24 §. Ђĕленсен пуплеври вырăнĕ.

Сăмахсен йунашарлăх саккунĕнђен ђĕленсен пуплеври вырăнĕ килет. Тĕслĕхсем илер. („ 30-31 страницсăри картана пăхмалла).

Çав картана пăхсассăн, акă мĕн курăнаĭ:

а) Пуплев пуçламĕшĕнђе хуçа, пĕтмĕшĕнђе калав пулаĭ; вĕсен умĕн вĕсене пăхăнакан ђĕленсем пулаççĕ.

е) Кĕçĕн ђĕленсем пулсан, вĕсем хуçапа калав хушшинђе пулаççĕ: малтан, хуçа хыççăн, вăхăт—ђĕлен пулаĭ; унтан урăтытăнса тăрусем, вĕсен умĕн вĕсене пăхăнса тăраканнисем (çумсем); унтан йунашар тытăнса тăрусем, вĕсем умĕн вĕсене пăхăнса тăраканнисем, йулашкинђен калав, умĕн, унçумĕсем пулаççĕ.

Çын хăй калас тенине васкамасăр, шухăшласа лăппăн калаĭ пулсан, ђĕленсен пуплеври вырăнĕ çапла халĕ каланă пек пулаĭ. Васкана ђухне, хытах шухăшласа каламан ђухне, йе пĕр пĕр сăмаха ыттисенђен уйăрса каланă ђухне, ђĕленсен йĕрки урăхла пулма та пултараĭ. Çапах ун ђухне те пăхăнса тăракан ђĕлен (йапала çумĕ) хăйне пăхăнтараканни умĕн тăни улшăнмасĭ. Тĕслĕхсем илер: Хура йытă вĕрет. Петĕр пулă тытнă.

Çак пуплевсенђе сăмахсене çапла улăштарса: «Йытă хура вĕрет», йе „Петĕр тытнă пулă“ тесен, пирĕн шухăш пĕтĕмпех ăнланмалла мар, йе пĕтĕмпех урăхла пулса кайаĭ.

Пĕр пĕр ђĕлене ыттисенђен уйăрарах илнĕ ђухне, ђĕленсен йĕрки улшăнма пултараĭ, терĕмĕр. Халĕ çавна пăхар.

1. Ăна пасарта куртăм епĕ. Ара! манăн йулашки çăкăрăма та илесшĕн-ĕçке есĕ. Мĕскер пулаĭ ĕнтĕ вăл? Ăçта кайса кĕђĕç вара вĕсем? Çапла пулђĕ вара пирĕн пурăнăç. Пĕлетпĕр епĕр вĕсене. Ытла та аван йурларĕç пайан. Тĕлĕнсех кайрăм епĕ йалти йурăсенђен.

Кунта хуçа çинђе асăрхав сахал. Ун пек ђухне хуçа пуплев вĕçне кайса ларма пултараĭ. Вăйсăр пусăмлă пулсан, тытăнса тăрусем те хыçала кайса ларма пултараççĕ.

2. Çав тĕслĕхсенђенех акă мĕн курăнаў: ляппăн каланă ђух, хыçалта, йе варринђе тăракан ђĕленсем, уйрăм пусăмлă пулсан, мала тухса тăраççĕ.

3. Атте ыран сутта хулана кайаў. Иван пиђи лашине *килтех* сутса йараў. Вĕсем пасара вăрттăн *ир ирех* тухса кайрĕç. Йакура *епĕ* çапрăм, Ивана *Петĕр* çапрĕ. Санра *мĕн вăйĕ* пултăр. Хам сăмахран *хам* тĕлĕнсе кайрăм. Вара вăл пурăнма *Капкасах* йулђĕ.

Кунта акă мĕн куратпăр: ляппăн каланă ђух калавран инçе тăракан ђĕленсем, уйрăм пусăмлă пулсан, калав умне пырса лараççĕ.

4. Халĕ сăвăри ђĕленсен йĕркине сăнар.

| | |
|---|---|
| Тухрăм кайрăм çулпала,<br>Хура çĕлен тĕл пултăм. | Çулпала тухса кайрăм та,<br>Хура çĕлен тĕл пултăм. |
| Пуш уйăхин вĕçĕнђе<br>Хĕвел пăхрĕ ăшăтса. | Хĕвел пуш уйăх вĕçĕнђе<br>ăшăтса пăхрĕ. |
| Хĕвел анђĕ хĕрелсе<br>Хура вăрман хыçнелле | Хĕвел хура вăрман<br>Хыçнелле хĕрелсе анђĕ. |

Сăвă пусăмĕсем тĕрĕс ђеретленсе пыма, рифмă тухма, сăвăсенђе шухăш пусăмĕ пулмасан та, сăмахсем вырăнĕсене улăштарма пултараççĕ.

Тата тĕслĕхсем:

Вĕсем ĕнер вăрмана ђасах кайса килђĕç.

Ђасах вĕсем ĕнер вăрмана кайса килђĕç.

Ĕнер вăрмана ђасах вĕсем кайса килђĕç, епир мар.

Вĕсем вăрмана ђасах ĕнер кайса килђĕç, пайан мар.

Вĕсем ĕнер ђасах вăрмана кайса килђĕç, хулана мар.

Хайхи тилĕ кайăкçă умне лап пырса тухрĕ.

Лап пырса тухрĕ хайхи тилĕ кайăкçă умне.

Хайхи тилĕ лап кайăкçă умне пырса тухрĕ.

Лап кайăкçă умне пырса тухрĕ хайхи тилĕ.

Лап кайăкçă умне хайхи тилĕ пырса тухрĕ.

Кайăкçă умне лап хайхи тилĕ пырса тухрĕ.

Çапла вара акă мĕн тухаĭ: Уйрăм пусăмлă пулсан, а) малта тăракан ђĕленсем: хуçасем, вăхăт-çумсем, урлă тытса тăрусем: калав умне пырса ларaççĕ; хыçалта тăракан ђĕленсем: калавсем, калав çумĕсем, йунашар тытăнса тăрусем пуплев пуçламăшне пырса ларaççĕ; у) пусăмсăр пулсан: хуçасем, вăхăт-çумсем, тытăнса тăрусем—калав хыçне кайса ларма пултараççĕ; ы) йапала çумĕ анђах йаланах хăйне пăхăнтаран ђĕлен умĕнђе пулаĭ: ă) сăвăсенђе тата сăмах йĕрки риттăмран та, рифмăран та килет.

*Хушса калани.* Хăш ђухне пĕр пĕр йапала йађĕ хытă ăсăрханса тăнине кăтартма „вăл, те" сăмах хушаççĕ:

Наркăмăш вăл пит усал йапала. Кам вăл санăн кукку? Етем тени ан алхастăр. Выђăх тени тĕреклĕ пултăр. Ака пăттине ăна пит тутлă туса çитереççĕ.

## 25 §. Ђăваш ђĕлхийĕн конструксийĕпе вырăс ђĕлхийĕн конструксийĕ.

Кăна пĕлес тесессĕн, хăш пуплевсене вырăсла куçарса пăхар:

Ађасем вăрмана çырлана кайакан çул пăсăлса кайнă—Дети лесу ягоде идущий дорога портясь пошел. Епĕр ађасем çырлана кайнине куртăмăр—Мы дети ягоде шествие видели. Çынсем пирĕн ĕне хĕрли çинђен калаçса ларaççĕ—Люди наш корова то-что-красный разговаривая сидят.

Тата çак тĕслĕхсене илер.

а) Ăшăтакан сăмах—*согревающий слово.*

Йепле хĕвел хĕрелсе тухаĭ, Çавăн пек илемлĕ хĕрелсе курăнам Йакур куçне. Йепле кăмакари вут çунса тухаĭ, пўрте ăшăтаĭ, çавăн пек Йакур ăшăнтăр ман çумра. Йепле пыл

Как солнце румянясь всходит, его подобно красивый румянясь покажусь Егор глазу. Как печка—из огонь горя выходит, избу согревает, его подобно Егор да—согреется моего подле. Как мед

касмӑк ҫумӗнҫе тараккан-шӑна кускалаҭ, ҫавӑн пек ман тавра Йакур кускаласа ҫӳретӗр.

кадка около таракан—муха толчется, его подобно моего вокруг Егор толчась да—ходит.

е) *Несчастный человек.—Мар телейлӗ ҫын.*

Один мужик поехал косить луга и все спал. В это время счастье ходило по свету. Приходит счастье к мужику и говорит: Вот ты вместо работы спишь и не уберешь сена, пока стоит ясная погода; потом на меня будешь пенять, скажешь: Нет у меня счастья.

Пӗр мушик кайнӑ ҫулма ҫарансем те пӗтӗмпе ҫывӑрнӑ. Ҫав вӑхӑтра телей ҫӳренӗ тӑрӑх тӗнҫене. Пыраҭ телей патне мушике те калаҭ: Акӑ есӗ вырӑнне ӗҫӗн ҫывӑратӑн та мар пуҫтарайатӑн уттӑн, ҫух тӑраҭ уйар ҫанталӑк, кайран ҫине мана пулӑн ӳпкелес, калӑн: Ҫук манӑн телейӗн.

## 26 §. Каламасӑрах паллӑ хуҫасем.

Пӳртрен тухрӑм, тайӑлтӑм, килтисенҫен уйрӑлтӑм. Кил кунта! Пиҫи-пиҫми ҫырлашӑн ҫӗрес йатса ан тухӑр. Ӗҫер, ҫийер, тӑвансем, ӗмӗр пӗрле пурӑнар!

Ҫак пуплевсенҫе хуҫа ҫук. Анҫах ӑна крамматтик кӗлетки тӑрӑх тума пулаҭ. Вӗсем: епӗ, есӗ, епӗр, есӗр сӑмахсем. Ҫак пуплевсенҫе хуҫа пулма ҫав сӑмахсем кӑна пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа епӗр вӗсене палламасӑрах паллӑ хуҫасем тетпӗр.

*Хушса калани*: Тырӑ вырса пӗтернӗ. Кунта хуҫа ҫук. Ӑна тӗрӗссипех тупма ҫук Кунта хуҫа пулма „ҫынсем, вӑл, вӗсем хайхисем, ҫав, ҫавсем, халӑх,“ тата ытти сӑмахсем те пултараҫҫӗ; ҫӑн тӗрӗссине пӗлме ҫук. Ҫавӑнпа ҫакӑн пек пуплевсене хуҫасӑр пуплевсем теҫҫӗ; вӗсем тулли пуплевсем мар. Вӗсем ҫинҫен 27 §-ра каланӑ.

## II. 27 §. Туллимар пуплевсем.

Калаҫнӑ ҭухне ҫын пуплевре кирлӗ сӑмаха йаланах пурне те каламаҫт, ҭи кирлине кӑна калаҫт.

Калӑпӑр, амӑшӗ сасартӑк аҭи кӑмака ҫинҭен ӳкнине кураҫт те, ун пуҫӗнҭе темиҫе тӗрлӗ шухӑш ҫиҫсе иртсе кайаҫт. Вӑл вӗсене пурне те калаймаҫт. „Пӗтрӗ!“ тесе, йе: Ӳкет! тесе кӑна кӑшкӑрса йараҫт. Епӗр кунта пуплев хуҫиче ҭӑн тӗрӗссипех кӑтартма пултараймастӑпӑр, мӗншӗн тесен, кунта *аҭа* та, *аҭам* та, *Ваҭук* та, *хайхи* те, *ывӑлӑм* та, тата ыттисем те хуҫа пулма пултараҫҫӗ. Кунта пире хуҫа паман, тупма та епӗр ӑна пултараймастпӑр.

Тата ҫакӑн пек тӗслӗх илер, иккӗн тӗл пулаҫҫӗ те, калаҫма тытӑнаҫҫӗ; Ӑҫта кайан?—Хулана.—Нумайа-и?—Икӗ куна. Ку пуплевсенҭе хӑшинҭе хуҫи те, калавӗ те ҫук. Вӗсемсӗрех шухӑша ӑнланма пулаҫт. Апла пулсан, вӑхӑтпа енеркийӗн економийӗ тӑрӑх, вӗсене каламасан та йураҫт.

Ҫавӑн пек пуплевсене *туллимар пуплевсем* теҫҫӗ. Вӗсене темиҫе ушкӑна уйӑрма пулаҫт: а) хуҫасӑр пуплевсем, е) калавсӑр пуплевсем, у) ӗҫхӗлӗ ҫук калавлӑ пуплевсем, ы) хуҫасӑр та, калавсӑр та пуплевсем.

*а) Хуҫасӑр пуплевсем*: Лашаран ҫӳлӗ, курӑкран лутра. Авалхи ҫӑкӑр-тӑвара астумаҫҫӗ. Михетере ҫаратнӑ!

*у) Калавсӑр пуплевсем*: Утне ҫитмен туртине. Ҫеҫен хир варӗнҭе ватӑ йуман. Есӗр миҫенӗн? Пӗҭӗкҫеҫҫӗ, хура пӳрт, шур ӑстарик сак ҫинҭе. Тав сана! Тайӑм пуҫӑм сире! Хуҫасем ӑҫта? Хурсем ҫырмара.

*ы) Ӗҫхӗлӗ ҫук калавлӑ пуплевсем*: Мунҭи урттӑш йӑвӑҫҫинҭен. Лашаран ҫӳлӗ, курӑкран лутра. Хула ҫулӗ таптакӑр. Сысна —выҭӑх Ултта ҫиҭҭӗрен пӗҭӗк. Ҫак сӑхман аттенӗн. Атте лаши тур лаша. Ман аттене мул кирлӗ, ҫиҭӗ йута йыш кирлӗ.

## Калав выранне „пур, çук“ сăмах пулни.

Нўхрепре пиҫетлесе хунă пиҫĕке пур иккен. Унăн виçĕ витре кĕрекен сăмавар пур. Кунтан ытла сăмахăм çук, санран ытла савнă тусăм çук. Улма саҫĕ варринҫе мунҫа пур. Çакă çутă тĕнҫере вăйли те çук етемрен. Пĕр ҫăваш та хăй хĕрне Михетер пек пăхас çук.

*Хуçасăр, калавсăр пуплевсем*: Ай, аллăма! Ах, ку ухмаха! И, аçа çапманнă пуçна! Ăçта унта? Ах, çак Михаҫа тенĕскере! Апла пулмасăр вара?

Сирĕн пуртă пур-и?—Пур (çук). Аҫа вăрмана!—Айук. Ăçта кайан?—Киле.

Ҫӗленсен пуп,

| Хуҫа | Вăхăт-ҫум | Урлă тытăнсатăру |
|---|---|---|
| Пӗр ҫын . . . . . | — | пасарта |
| Сармантейӗн сарă ҫăххи . . . . . . | — | — |
| Аҫасем . . . . . | — | вăрманта |
| Акҫонăв . . . . . | — | каттăрка ҫӗнӗрен килнӗ ҫынсем патӗнҫе |
| Пӗр кайăкҫă . . . | — | ҫутă кӳлӗ хӗрине |
| Епӗ . . . . . . . | — | хамăн ҫӗнӗ ҫӗлӗк тумалли тилӗ тирӗнҫен |
| Епӗ . . . . . . . | халӗ | сан валли |
| Вăл . . . . . . . | — | хăй ӗмӗрӗнҫе |
| Кăвакал . . . . . | йаланах | — |
| Кăвакал . . . . . | — | — |
| Епӗ . . . . . . . | ун ҫухне | йăмăкăмпа |
| Аҫасем . . . . . | виҫӗм кун | ҫырмара |
| Вăл . . . . . . . | ир ирех | пасара |
| Пӗри . . . . . | паҫăр | урапа ҫинҫе |
| Йăтăсем . . . . . | — | урамра |
| Епӗ . . . . . . . | есӗр сăмавар хуриҫҫен | лашана |
| Епӗр . . . . . . | Ҫӗмпӗртен киле таврăннă ҫух | ҫул ҫинҫе |

## ...леври йĕрки. *(23-мĕш § çумне хушни).*

| Йунашар тытăнсатăру | Çумсем | Калавсем |
|---|---|---|
| аш . . . . . . . | — | илнĕ. |
| сарă çăмарта . . . | — | тунă. |
| виçĕ пăт çырла . . | — | татнă. |
| кам мĕн каласа кăтартнине . . . . . | — | итлесе ларнă. |
| хăйĕн йурăхсăра тухнă танатне . . . | — | карнă. |
| кĕрĕк çухи . . . . | — | тутарттартăм. |
| хĕр . . . . . . . | — | çураçса хутăм. |
| кĕнеке . . . . . | сахал | вуламан. |
| апат . . . . . . | нумай | çийет. |
| — | — | апат нумай çийекен кайăк пулаĭ. |
| — | пуканелле | выӡаттăм. |
| пулă . . . . . . | нумай | тытнă. |
| — | вăрттăн | тухса кайрĕ. |
| — | лаша хăвалапă пек | тăраĭ-ӡĕ. |
| — | сасартăк хайаррăн | вĕрсе йаӡĕç. |
| ĕнер атте çулса килнĕ утта . . . . . | — | патăм. |
| — | сивĕ ӡпре йермеллех | шăнтăмăр. |

**Астутарни:** Йапала çумĕ йалан хăй йапали умĕн пулаĭ.

# ТУПМАЛЛИ.


Стр.

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
1. Çинтакçис мĕн вĕрентет. . . . . . . . . . . . . 5
2. Сăмах майлашĕвĕпе пуплев . . . . . . . . . . —
3. Пуплев уйрăмĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . 6
I. Тулли пуплевсем.
4. Пуплев хуçипе калавĕ . . . . . . . . . . . . . . 7
5. Хуçапа калав майлашни . . . . . . . . . . . . 8
6. Пуплев ҫĕленĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . —
7. Пуплеври ҫĕленĕсен хушши . . . . . . . . . 9
8. Тытăнса тăру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
9. Йунашар тытăнса тăру . . . . . . . . . . . . . 10
10. Хыçлă тытăнса тăру . . . . . . . . . . . . . . —
11. Мĕнле сăмахсем тытăнса тăру пулаççĕ . . . . . —
12. Хуçа çумĕпе тытăнса тăру çумĕсем . . . . . . 11
13. Мĕнле сăмахсем йапала çумĕсем пулаççĕ . . . . —
14. Калав çумĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
15. Суппинсем йапала йаҫĕсем вырăнне пулни . . . 13
16. Умлă калавсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
17. Пуплевле ҫĕленсем . . . . . . . . . . . . . . . —
18. Килĕшуллĕ çумсем . . . . . . . . . . . . . . . 18
19. Пуплев çумĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . 19
20. Пĕрлешнĕ пуплевсем . . . . . . . . . . . . . . 20
21. Йышлă пуплев . . . . . . . . . . . . . . . . . —
22. Йут сăмахлă пуплевсем . . . . . . . . . . . . 22
23. Сăмахсем йунашарланни . . . . . . . . . . . . 23
24. Ҫĕленсен пуплеври вырăнĕ . . . . . . . . . . 25
25. Ҫăваш ҫĕлхийĕн конструксийĕпе вырăс ҫĕлхийĕн конструксийĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
26. Каламасăрах паллă хуçасем . . . . . . . . . . 27
II, 27. Туллимар пуплевсем . . . . . . . . . . . . . 28

# ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

**В складе Чувашского Издательства на чувашском языке имеются следующие книги:**

1. А. М. Михайлов. Сайра Майаксем (Политтиккă букварĕ).
2. Р. Ç. К. Л. С. Историйĕ.
3. П. И. Иванов. Руководство к ведению первоначальных уроков русского языка в чувашских начальных школах.
4. Йалти шкулсенҫе малтанхи çул вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
5. Йалти шкулсенҫе икĕмĕш çулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
6. Йалти шкулсенҫе виçĕмĕш çулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
7. А. Йевçихнейĕв. Çĕр котексин никĕсĕсем.
8. В. Лункевĕҫ. Аслатипе Çиçĕм.
9. РФСК Республикки Çĕр котекси.
10. К. Йакотовски. Етем ӳтпĕвĕ, малтанхи шкулра вĕренмелли кĕнеке.
11. Йуман. Ахтономлă Ҫăваш Оплăçĕ (Родиноведение).
12. Е. Д. Тимофеева. Çулпуçĕ (Букварь) (2-мĕш хут çапнă).
13. Костычев. Тыррапулла уйарпа цĕтересреп йепле сыхламалла.
14. А. Т. Быков. Краткий словарь общеупотребительных русских и чувашских слов.
15. К. Фламмарион. Астрономи кĕнеки, (75 рисунăклă).
16. Ф. Т. Тимофеев. Ҫăваш ҫĕлхийĕн Крамматтикĕ.
17. Ф. П. Павлов. «Сăрпай» Хитрелетнĕ ҫăваш йуррисем.
18. Йăвăçкурăк, йна пăхса ӳстересси.
19. РÇЛКС уставĕ (ҫăвашла тухнă).
20. М. А. Дернов. Утарăн тĕп ĕçĕсем.
21. Л. М. Кахановиҫ. Р. К. (полҫшевиксен) партти мĕнле йĕркелелнсе тăрать? Партти уставĕ çинҫен.
22. А. Богданов. Политтикăллă економи.
23. 1925-мĕш çулхи Ҫăваш Кăлентарĕ.

**Печатаются на чувашском языке:**

1. Русский букварь для чувашских школ.
2. Общая география.
3. География СССР.

С требованиями обращаться по адресу:

**г. Чебоксары Ч. А. О, ЧУВАШИЗДАТ.**

Оптовым покупателям делается скидка.